# Анисим Асламаса асӑнса

***Пурӑннӑ пулсан чӑвашсен мухтавлӑ композиторӗ, РСФСР тата Чӑваш АССР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Анисим Асламас /Васильев/, Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫине хутшӑннӑ совет салтакӗ кӑҫал 90 ҫул тултармаллаччӗ. Шел, ҫепӗҫ юрӑсемпе романссен, вун-вун ораторипе сонатӑсен, ҫавӑн пекех пысӑк калӑплӑ хайлавсен авторӗ 2000 ҫулта пирӗнтен яланлӑхах уйрӑлса кайрӗ.***

Анисим Васильевич Етӗрне районӗнчи Вӑрманкас Асламас ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Пархатарлӑ ентешӗсем унӑн ятне нихӑҫан та манмаҫҫӗ. Шӑп вунӑ ҫул каялла Етӗрнери искусство шкулӗ Асламас ячӗпе хисепленме пуҫларӗ. Вӑл ҫут тӗнчене килнӗ ялти чи илемлӗ урам та Анисим Асламас ячӗллӗ.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑранпа искусство шкулӗн ертӳҫисем пуҫарнипе районти 10 ытла шкулта тата кашни культура учрежденийӗнче Анисим Васильевича халалласа тематика каҫӗсем, выставкӑсем тата ятарлӑ концертсем йӗркелерӗҫ.

Ҫак кунсенче Чӑваш Республикин Наци библиотекинче виҫӗм ҫул ӗҫлеме пуҫланӑ «Мерчен» музыка тӗпелӗ вара хӑйӗн йӑлана кӗнӗ кӗрхи уявне – «Чӑваш халӑхӗн сӳнми таланчӗ» мероприятие – А.В.Асламас юбилейне халалларӗ. Савӑнӑҫлӑ каҫра Анисим Васильевича республикӑри композиторсен ассоциацийӗн президенчӗ, Пӗтӗм Раҫҫейри музыка обществин тава тивӗҫлӗ деятелӗ Николай Зимин, композитор хӗрӗ, Шупашкарти Ф.П.Павлов ячӗллӗ музыка училищин преподавателӗ Татьяна Асламас, Шупашкар хулинчи халӑха социаллӑ пулӑшу паракан комплекслӑ центр директорӗ Георгий Степанов, республикӑри пенсионерсен союзӗн ертӳҫи Валерий Сапожников тата паллӑ композитора лайӑх пӗлнӗ ҫынсем аса илчӗҫ.

«Мерчен» тӗпелӗн черетлӗ уявӗ Етӗрнери культура ҫурчӗ ҫумӗнчи «Палан» халӑх ансамблӗн концерчӗпе вӗҫленчӗ. Унӑн илемлӗх ертӳҫи, Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, хӑй тӗллӗн вӗреннӗ композитор Валентин Семяхин пӗлтернӗ тӑрӑх – культура ҫуртӗнче А.В.Асламас юбилейне халалланӑ регионсен хушшинчи «Сӑр ҫинчи асамат кӗперӗ» музыка фестивалӗ пуҫланать.

■ Петр СИДОРОВ